Паян – Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ

# «Кашни утăмах лайăххи енне тăвасчĕ»

***Июлĕн 8-мĕшне (кивĕ стильпе – июнĕн 25-мĕшне) Раççейре пурăнакансем пĕлтĕртенпе Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ тесе уявлаççĕ. Çак илемлĕ уява Раççейре 200 çул каяллах паллă тунă, апла пулсан вăл пирĕншĕн, православи çыннисемшĕн, пысăк уяв, пĕлтерĕшлĕ кун. Вăл сăвапла Петĕрпе Феврони ячĕсемпе çыхăннă, вĕсен юратăвĕпе тата шанчăклăхĕпе. Çавăнпа та уяв кунĕнче хăвăр çемьерисене, тăвансемпе юлташсене саламлама ан манăр. Çемье-çке-ха пурнăç тытăкăчи, малашлăха çирĕпрех те хăюллăрах пăхтаракани.***

Пирĕн район та, ял тăрăхĕсем те шăпах тавраша хисепе тивĕç çемьесем сахал мар пулнипе малаллах аталанса пыраççĕ. Акă Орининта пурăнакан Алексеевсен çемйине те çакнашкаллисен шутнех кĕртмелле.

Валентина Ивановнăпа Сергей Иванович иккĕшĕ те Актай ялĕнче çуралса ÿснĕ. Мăшăрĕнчен çулĕсемпе кăшт аслăрах пулнă май Сергей Иванович: «Валентинăна хама валли пăхса ÿстертĕм», – тесе шÿтлет. Ĕçчен те вăрвар хĕре кам килĕштермĕ ĕнтĕ? Маттур каччăна тата? Ашшĕ-амăшĕ вăл вăхăтра ачисене ĕçпех ÿстернĕ те, урăхла мĕнле пулăн-ха? Ĕç хыççăн вара каçсерен кăмай-и, сахал-и – сакăр çул тÿпери çут çăлтăрсемпе киленме, ĕмĕт-шухăшсене пĕлтерме Сергей чĕререн килĕштернĕ хĕре урама тухма чĕннĕ.

Вăхăт çитсен Сергей çартан таврăнать, медучилище пĕтерет. Валентина университетри историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухать. Çирĕп туслăх вара 1993 çулхи çулла туй те кĕрлеттерет.

– Çемьери туслăха, юратăва упрама йывăр-и? – ыйтатăп çак мăшăртан.

– Ку ĕмĕр тăршшĕпех туса пымалли йывăр ĕç, – пуçарчĕ калаçăва Валентина. – Пĕр-пĕрне вăхăтра çул пама, каçарма пĕлни, пĕрин кăмăлĕ кăра пулсан, теприн лăпкăрах пулмалла. Çамрăк чухне çемье чăмăртанма, паллах, юрату кирлĕ. Кайран вара – ăнлану, шанчăклăх. Пĕр-пĕрин шухăш-кăмăлĕпе, ĕçĕпе интересленсе тăмасан йывăртарах. Пире пĕр ĕçре ĕçлени питĕ пулăшать. (Иккĕшĕ те Орининти вăтам шкулта ĕçлеççĕ. – **авт.**) Пĕр-пĕринпе калаçмалли, канашламалли тупăнсах тăрать, – тет кил тата çемье ăшшине тытса тăракан.

Мăшăрĕ вара унпа килĕшет. «Интерессем пĕр килменнипех çемьесем те арканаççĕ ĕнтĕ. Манăн мăшăр вара маншăн чи пĕрремĕш пулăшакан. Педагогика институтĕнче вĕреннĕ чухне те (Сергей Иванович физкультура учителĕ – **авт.**), халĕ спорт ăмăртăвĕсене хутшăннă чухне те – яланах пулăшса пырать. Психолог вырăнĕнче те, чи хастар болельщик шутĕнче те вăлах», – тет мăшăрĕ çине кăмăллăн пăхса.



Çемьере икĕ хĕр ача ÿсет: Алена тата Аня. Иккĕшĕ те пĕр кунта, пĕр уйăхра çуралнă вĕсем. Туслă çемьере çапла та пулать иккен. Алена 9 класс вĕренсе пĕтерчĕ кăçал. Пĕрремĕш класранпах «5» паллăсемпе кăна ĕлкĕрсе пырать. «Уроксене яланах питĕ тĕплĕн тăвать», – теççĕ ашшĕпе амăшĕ хăйсен аслă хĕрĕ пирки.

Питĕ хастар хĕр ÿсет Алексеевсен: Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине тивĕçнĕ Алена, Раççей шайĕнчи право предмечĕпе иртнĕ олимпиадăра та çĕнтерÿçĕ пулса тăнă. Амăшĕ право предметне вĕрентет шкулта. Сахал мар хатĕрленме тивнĕ ĕнтĕ вĕсен лайăх кăтарту пултăр тесе.

Спортра та, ытти тĕрлĕ мероприятисенче те Алена яланах малтисен ретĕнче. Акă нумаях пулмасть иртнĕ «Зарницăпа» «Орленок» республика ăмăртăвĕсене те вăл хутшăннипе ЧР Президенчĕн Кубокне çĕнсе илме пултарчĕç Муркашсем. Унта Алена ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕнчен С. Гапликовран интервью илме те май тупнă. Çапла пулмалла та ĕнтĕ пурнăçра. Малаллах талпăнмалла, хăвна валли çул усмалла...

Виçĕ çулхи Аня садике кăна çÿрет-ха. Çапах та çирĕп кăмăлĕ халех сисĕнет. Кĕнекесем курма килĕштерекенскер, сăвăсем те пăхмасăр сахал мар пĕлет. Кĕçĕнни аппăшне пăхса вĕренсе пырать. «Алена пек пулатăп», – тет.

Ашшĕ-амăшĕн тăрăшулăхне, мал туртăмлăхне курса ÿсеççĕ ачисем. Ăруран ăрава аслисене хисеплесси те куç умĕнчех пулса пырать çемьере. «Пирĕн хамăрăн ачасемшĕн яланах ырă тĕслĕх пулмалла. Вĕсен интересĕсене те пĕтме памалла мар, аталантарма майсем тупмалла. Аленăн юлташĕсене те эпир яланах ăшшăн кĕтсе илетпĕр», – теççĕ Алексеевсем.

– Мĕн-ха вăл сирĕншĕн çемьери телей? – кăсăклантăм эпĕ.

– Пĕр-пĕрне ăнланни, ачасем сывă та тĕрĕс-тĕкел ÿсни, телейлĕ пулни. Çакă вăл пирĕншĕн телей. Килте, çемьере лайăх лару-тăру пулсан, ĕçре те лайăх, ĕçре лайăх пулсан – çемьере те. Апла пулсан кашни утăмах лайăххи енне тăвасчĕ, – терĕ килĕшÿллĕ мăшăр, малаллахи ĕмĕтсем татах та пысăк пулнине палăртса.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ÿкерчĕкре: Алексеевсен туслă çемйи.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

Патшалăх пулăшать

# Кризис вăхăтĕнче те автомашина туянма пулать

– Эпир автомашинăпа чухне пире кризис та хăваласа çитеймĕ, – терĕ район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов эрне кун Муркашра иртнĕ «Авточупава» хавасла лару-тăрура уçнă май. Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ «Росгосстрах» компанийĕпе тата республикăри автосалонсемпе пĕрле иртерекен çак акци пуçланас умĕн Муркашри «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умне LADA «Приора», LADA «Калина» тата Nissan «Note» – пурĕ 4 автомашина килсе чарăнчĕ.

–Халăха автотранспортпа тивĕçтермелли ятарлă патшалăх программипе килĕшÿллĕн 350 пин тенкĕ таранччен тăракан автомашинăсене кредитпа илме пулать. Çакна хамăр çĕршывра автомобильсем туса кăларакан заводсене пулăшас тĕллевпе тунă. Унта ют çĕршыври производительсем те хутшăнаççĕ, – терĕ малалла Юрий Александрович.



Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ А.А. Мажанов каланă пек, автомашина туянсан килсе çапакан савăнăç хумне нумайăшĕ хăй çинче туясшăн пулĕ-ха. Çак кампани вăхăтĕнче автомашина туянакансен çăмăллăх та пулать иккен: «Росгосстрах» компанийĕн республикăри уйрăмĕн директорĕ А.Г. Пирожков каланă тăрăх, çак кампани вăхăтĕнче туяннă автомашинăсене страхламалли тарифа 15 процент чухлĕ чакараççĕ. Эппин, суйласа ил те, хăвна кирлĕ марккăна туян. «Шупашкар – Лада» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕ С.Н. Холименко палăртнă тăрăх, республикăна «Ладăсене» сутмалăх 500 таран кÿрсе килнĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Сăн ÿкерчĕкре: «Авточупава» уçнă самант.**

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

Çамрăксен çулталăкĕнчи Çамрăксен кунĕнче

## Пуласлăх – çамрăксенче

Июнĕн 26-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Варламовка кÿлли хĕррине республикăри чи пултаруллă яш-кĕрĕм хăйсен Çамрăксен хули (МолГрад) форумне пухăнчĕ. Пирĕн Муркаш районĕнчен унта районти тĕп больницăри çамрăксен канашĕн председателĕ, врач-дерматовенеролог Е.М. Кожевникова, канаш председателĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен çумĕ С.М. Лукина бухгалтер, канаш председателĕн йĕркелÿпе право енĕпе ĕçлекен çумĕ, эндоскопи кабинечĕн медсестри С.В. Савельева, çавăн пекех район администрацийĕн ĕçченĕсем М.Н. Никитина, С.В. Лукин хутшăнчĕç. Уяв хавасла тата пуриншĕн те интереслĕ иртрĕ.

Çавна та каласа хăвармалла. Кăçал Çамрăксен кунне халалланă уявсем районта ял тăрăхĕсенче пулса иртрĕç. Район центрĕнче пуян программăллă уяв июлĕн 3-мĕшĕнче пулчĕ. Юлашкинчен вара каçхи тÿпене фейерверк çутатрĕ.

**С. ЛУКИНА.**

Судран

# Ĕç укçине вăхăтра тÿлеменшĕн

Юлашки вăхăтра массăллă информаци хатĕрĕсемпе «кризис» сăмаха час-часах калаççĕ. Ĕçсĕрлĕх, ĕç укçи тÿлеменни ÿссех пырать. Çапла вара – саккуна пăсни те.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсемпе танлаштарсан, халĕ тÿлевсĕр ĕçлеттерни нумай. Анчах та ĕç паракан икĕ уйăхран ытла ĕç укçи тÿлемест пулсан, ăна саккунпа килĕшÿллĕн айăплама май пур: 120 пин тенкĕ штраф. Енчен те укçана вăхăтра паманни йывăрлăхсем кăларса тăратнă пулсан – 500 пин тенкĕ таранах.

Çынсен ĕç прависене хÿтĕлессипе вара Раççей Федерацийĕн прокуратура тата суд органĕсем тăрăшаççĕ.

Акă пĕрремĕш çурçуллăха илес пулсан, Муркаш районĕнчи миравай судьясем патне прокуратурăран çынсем ĕç укçине шыраса илме ыйтнипе пурĕ 450 заявлени килнĕ.

Çак тапхăрта Муркаш районĕн 1 номерлĕ суд участокĕн миравай судйи ĕç укçине вăхăтра тÿлемен ыйтупа пурĕ 380 суд приказĕ кăларнă: «Ударник» хуçалăхра – 1355054 тенкĕлĕх 209 приказ, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхра – 122777 тенкĕлĕх 21 приказ, Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра – 290780 тенкĕлĕх 97 приказ, «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционер обществипе – 313736 тенкĕлĕх 53 приказ.

Муркаш районĕн 2 номерлĕ суд участокĕн миравай судйи ĕç укçине вăхăтра тÿлемен ыйтупа пурĕ 160 суд приказĕ кăларнă: «Хлебороб» пĕрлешÿпе – 4589 тенкĕлĕх 14 приказ, «Герой» хуçалăхпа – 84172 тенкĕлĕх 72 приказ, «Передовик» хуçалăхпа – 153288 тенкĕлĕх 74 приказ.

Суд приставĕсем ĕçе йĕркеллĕ тунипе вара çак суд йышăнăвĕсем вăхăтра пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Ĕç укçине хуçалăхсенче ĕçлекенсене куçарса панă.

**Е. НИКИТИНА,**
**Муркаш районĕн 2 номерлĕ суд участокĕн миравай судйи.**


## Пĕлтерÿсем. Объявления

**Только до 15 августа в честь 50-летнего юбилея ЗАО «МСО «Моргаушская» делает скидки и подарки при покупке 1- и 2-хкомнатных квартир.**
**Обращаться по тел.: 69-7-23, 671-999 (сот.) в доп. офис по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 (здание редакции, 2-ой этаж). 1–2.**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1118, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 9007 кв. м.
Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель населенных пунктов, с кадастровым номером 21:17:110101:122, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Тереси, ул. Новая, площадью 4000 кв. м.
Заявления от организаций и граждан принимаются в течение месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель населенных пунктов, с кадастровым номером 21:17:110101:123, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Тереси, ул. Новая, площадью 4000 кв. м.
Заявления от организаций и граждан принимаются в течение месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:031001:410, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, Шешкарский дебаркадер, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:031001, для добычи, хранения, переработки и реализации рыбной продукции, площадью 278 кв. м.
Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:110201:94, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Молгачкасы, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:110201, для ведения личного подсобного хозяйства: площадью 2759 кв. м.
Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

**В мебельный салон требуются:**
**– продавец-консультант;**
**– сборщик мебели.**
**Адрес: с. Моргауши, здание бани. Тел.: 8-917-679-87-61.**

**Тăхăр хут пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр. Декабрь уйăхĕнче пăруламалла. Тел.: 8-917-679-87-61.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.**
**Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 5-40.**

**Сентябрь уйăхĕнче виççĕмĕш хут пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 60-4-92.**

**Утерянный аттестат № 21АА 0018021, выданный МОУ «Моргаушская СОШ» на имя Андреевой Натalии Валерьевны, считать недействительным.**

**Утерянный военный билет № 8155720, выданный 05. 06. 1991 г. ВК Моргаушского района на имя Егорова Андрея Борисовича, считать недействительным.**



Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 07.07.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3706.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.